# УХСАЙ ТĔНЧИ

*Улăп сухаçă пек курăнса тăрать вăл пирĕн чăваш литературинче. Пирĕн çĕнĕ культурăн виçĕ сийне — Пушкăрт, Чĕмпĕр тата хамăрăн тĕп Чăваш çĕрĕн асамлă сийĕсене пĕр культурăна пуçтаракан чаплă сухаçă. Умĕнхи литературăра вăл, паллах, Константин Иванова пуç çапнă. Иван Яковлевич Яковлев уншăн — чăваш çулпуçĕ, тĕнче сăпки — Чăваш çĕрĕ.*

*Ухсай тĕнчи — Çĕр-аннемĕр чĕлхи, «тăпра поэчĕ», тетпĕр ăна çавăншăнах. Тĕп сăнарĕ — Çĕр ăсчахĕ — Кĕлпук мучи. Поэзире — хутран касса тетте çуртсем лартмасть Ухсай, кăмака хутса, çăкăр пĕçерсе, выльăх-чĕрлĕх усраса пурăнакан çынсен хĕвел айĕнчи пура поэми-романĕсем вăл çырнисем, Чăваш çĕрĕ çинчен Ухсай ухсайла каласа панисем.*

*Сергей Кадикин чулçă Ухсай палăкне чукласа чун кĕртет. Кăçалхи чӳк уйăхĕнче ку палăка, поэт çуралнăранпа 85 çул çитнĕ тĕле, унăн тăван ялне Пушкăртри Слакпуç ялне лартмалла. С. Кадикин çĕр ĕçĕпе ĕçлесе пурăнакан чăваш валли хавхаланса тупнă сăнар: ґранит чул ăшĕнчен, тăпра вăйне сирсе, поэт-шухăшлавçă капмар-çамкаллă Ухсай-Сократ хăпарать. Чăваш. Çăлтăр ачи.*

**Хветĕр АГИВЕР**